# ДИПЛОМ ПАНĂ

Виçĕмкун Шупашкарта Советсен Çурчĕн пĕчĕк залĕнче Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникне Владимир Иванович Агеева Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине панă чухне искусствăпа литература деятелĕсем йышлăн пулчĕç.

Чăваш АССР Министрсен Совечĕн председателĕ Л. П. Прокопьев Владимир Иванович Агеев пултарулăхĕ çинчен каласа пачĕ, ăна çак пысăк наградăна илме тивĕçлĕ пулнă ятпа хĕрӳллĕн саламларĕ.

— Хăвăрăн пархатарлă та йывăр ĕçĕрте партилĕхпе халăхлăх принципĕсене чунтан паранса ĕçлени çитĕнӳ тума пулăшать Сире,— терĕ вăл.— Искусство сыннисен пысăк тивĕçне асра тытса, Эсир малашне те лайăхрах произведенисем тăвасса шанатпăр. Л. П. Прокопьев художника диплом тата лауреатăн хисеплĕ знакне пачĕ.

В. И. Агеева пĕрле ĕçлекен юлташĕсем, кĕнеке издательствинче тата «Капкăн» журнал редакцийĕсенче ĕçлекенсем саламларĕç.

В. И. Агеев хăйĕн ĕçне пысăка хурса хакланăшăн партипе совет органĕсене чĕререн тав турĕ.